Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович**
**Книга: Ӳссен эсӗ кам пулан?**
**Стихотворение: Пирӗн телей.**

Пӗррехинче аннерен,
Те халиччен илтменрен:
«Телей тени – мӗн тени?» –
Тесе ыйтать Сӑпани.
Анне ӑна йӗркерен,
Мӗнпур чунтан-чӗререн
Çурӑмӗнчен лӑпкаса
Ӑнлантарчӗ каласа:
«Эсӗ паттӑр çитӗнни,
Ача садне çӳрени,
Унта вӑйӑ выляни –
Телей çавӑ, Сӑпани.
Мӑн заводсем шавлани,
Хирте тыр-пул кашлани,
Эпир лайӑх пурӑнни –
Телей çавӑ, Сӑпани.
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхни,
Спутник вӗçсе çӗкленни,
Çӗршыв ӳсни, сарӑлни –
Телей çавӑ, Сӑпани.
Эпир сана юратни,
Пире эсӗ итлени,
Маттур, лайӑх вӗренни –
Телей çавӑ, Сӑпани...»

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования. Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.